Ваçлей Игнатьев




# Пĕчĕк çулçӳревçĕ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ – 1960

Васлей Игнатьев

# Пĕчĕк çулçӳревçĕ



ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1960

ОБЯЗАТ ЛЬНЫЙ ЭКЗЕ ПЛЯР
ДОС ВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
14 ноября 1960 г.
№ 357

**Василий Герасимович Игнатьев**

МАЛЕНЬКИЙ ПУТЕШЕСТВЕННИК

Художник **Н. Шадрин**

Редактор *Ю. Скворцов.* Технич. редактор *А. Петров.*
Худож. редактор *Н. Кириллов.* Корректор *Н. Деомидов.*

НТ 00932. Сдано в набор 7/IX-1960 г. Подписано к печати 27/IX-1960 г.
Формат 60×92/16. Объем 2,0 печ. л. Уч. изд. 1,37. Заказ № 1320.
Тираж 3500 экз. Цена 45 коп. С 1. I. 1961 г. цена 4 коп.

*Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР*
*г. Чебоксары, Володарского, 5.*

Лампа çутас умĕн Кĕркури сĕтел хушшинче картина сăрласа ларатчĕ. Ĕçрен тин кăна таврăннă ашшĕ алă çуса пĕтериччен вăл симĕс тăрăллă пӳрт умĕнчи йăмра тураттисем çине ăçта килчĕ унта хура кураксем лартса тухма тăрăшрĕ, вара картинине ашшĕне кăтартма та пулать!

Ашшĕ алă çуса пĕтернĕ çĕре амăшĕ ун патне кĕске алшăлли йатса пычĕ.

Ашшĕ аллине шăлса типĕтрĕ те:

— Ыран Шупашкара арбуз сутма яраççĕ,— терĕ. Кĕркури хура кăранташне сĕтел çине пăрахрĕ.

— Атте...

— Мĕн-ха, Кĕркури?

— Эпĕ те пĕрле пыратăп...

— Эпир ирех каятпăр, ывăлăм, çутăлнă-çутăлманах.

Кĕркури чĕри кăлт-кăлт тапа пуçларĕ.

— Эпĕ çутăлнă-çутăлманах тăратăп, атте!

Ашшĕ чĕнмерĕ. Кĕсйинчен пирус кăларчĕ те ăна пӳрнипе тытса çавăркаларĕ, унтан çăварне хыпса кăмака çамки çинчен шăрпăк илчĕ.

— Апат мĕн пĕçертĕн эсĕ?— ыйтрĕ вăл амăшĕнчен.

— Кăмпа ăшаларăм, часах чей те вĕреме кĕрет,— терĕ амăшĕ кăмака умĕнче.

Кĕркури пырне ним çук çĕртенех темскер кумкки пырса ларнă пек пулчĕ. Ашшĕ те, амăшĕ те ăна «йĕнинчен ытла пысăк намăс та çук» тесе темиçе хутчен те вĕрентнĕ ĕнтĕ, çавăнпа вăл епле пулсан та йĕрес мар терĕ. Анчах Кĕркури пурпĕрех чăтаймарĕ, сылтăм аллипе куçне шăлса илчĕ-илчех.

— Мĕскер эсĕ?— тĕлĕнсе пăхрĕ ашшĕ.

Тĕпелтен амăшĕ тухрĕ.

— Юрĕ, юрĕ,— Кĕркурие хулпуççинчен лăпкарĕ вăл.— Ан нĕшĕкле ĕнтĕ, илсе каять.

Кĕркури амăш çине кăшт пăхса илчĕ те ашшĕ енне çавăнса тăчĕ. Шупашкара каяканни амăш мар-çке-ха — ашшĕ!

— Апат çи те çывăрма вырт. Илсе каятăп,— терĕ ашшĕ, чӳречерен урамалла пăхса, унтан электричество лампине çутса ячĕ. Кĕркуришĕн пӳрт ăш-чикки çеç мар, мĕнпур тĕнче ялтраса çуталнăн туйăнчĕ. Вăл ашшĕ патне чупса пырса ун мăйĕнчен уртăнасшăн пулчĕ, анчах ашшĕ ăна сарă çӳçĕнчен шăлса илнисĕр пуçне урăх нимĕн те каламарĕ, мăйĕнчен уртăнма та памарĕ: ытлашши ачашланнине юратсах каймасть вăл — амăшĕ пек мар. Кĕркури вара сĕтел çинчен халь кăна сăрласа ларнă картинине илсе килчĕ.

— Пăх-ха, атте! Камсен пӳрчĕ ку?!

— Маттур,— тесе мухтарĕ ашшĕ, картина çине пăхкаласа тăнă хыççăн. Амăшĕ пӳлĕмрен чашкăрса ларакан йĕс сăмавара йăтса тухрĕ. Сăмавар çинче пĕр рет йĕри-таврах пилĕк пус укçа пек çаврака пичетсем пур, кашни пичечĕ çинчех — çын ларать. Ашшĕ каланă тăрăх, кусем — патша сăнĕсем. Ĕлĕкхи укçасене çавăн пек кăларнă, тет, иккен.

Кĕркурин апат çиес килмерĕ. Сĕтел пуçтарсан, ăна тӳрех çывăрма выртгарчĕç. Кĕркурин çыврасси те килмест, анчах апла пулин те вăл вырăн çинчен тăмарĕ: ашшĕ çиленме пултармасть-и-ха? Вăл кăвак утиялпа пуç урлах витĕнчĕ те хăй тĕллĕн кулса илчĕ. Тĕпелте амăшĕ савăт-сапа чăнкăртаттарса çăва пуçларĕ, унтан чăлантан йывăç кункăрапа çăнăх йăтса

кĕчĕ. «Хăçан çутăлĕ-ши?»— хăш! сывласа илсе шухăшларĕ Кĕркури. Ашшĕ фуфайкине тăхăнса выльăхсем патне тухрĕ. Вăл алăка уçнă-уçманах тултан сапсарă куçлă хура «Вишун» чупса кĕчĕ те тĕпеле иртсе кайрĕ, вара, тӳрех каялла çаврăнса килсе, Кĕркури вырăнĕ çине сиксе хăпарчĕ. Қалама çук хытă мăрăлтатса, вăл сăмсипе те, урисемпе те утияла сирме пуçларĕ. Кĕркури пĕчĕк хушăк туса парсанах, йăпăш кăна шала кĕрсе тăчĕ. Унăн йĕпе те сивĕ сăмси Кĕркури питне перĕнчĕ. «Фу, шăши шăрши кĕрет санран!»— терĕ те Кĕркури ăна каялла тĕртсе кăларчĕ. Кушак çури вара хăех çĕре сиксе анчĕ... Кĕркури ыран ирхине Шупашкара каясси çинчен ĕмĕтленме пуçларĕ. Шупашкар хăш енчине пĕлет вăл тата унта çитес тесен мĕн чухлĕ каймаллине те чухлать. Çатралăх ялне çитме кунтан вунă çухрăм. Кĕркури унта Ваçли куккăшĕсем патне амăшĕпе те, ашшĕпе те темиçе хутчен хăнана кайнă. Шупашкара вара çавăн чухлĕ ултă хут ытларах каймалла. Шупашкара çитес тесен, ултă хутчен Çатралăха каймалла ĕнтĕ...

Кĕркури çаплах çывăрса каяймарĕ. Вĕсем патне кӳршĕри хăрах куçлă Куçма тете каçса ларчĕ.— Виçĕ кунтан юлашки капансене çапса пĕтеретпĕр,— терĕ вăл. Унтан колхоз тата икĕ кило тырă уйăрса парать, терĕ. Куçма тетепе ашшĕ калаçнинченех Кĕркури хăйсен колхозĕ районта чи малтан патшалăха тырă парса татнине пĕлет. Анчах Кĕркури ашшĕ тырă тунă çĕрте мар — колхоз пахчинче ĕçлет. Унта тем тĕрлĕ пахча çимĕç те пур: хăяр та, кишĕр те, арбуз та, кавăн та, помидор та — темĕн те! Кĕркури ашшĕ çинчен пĕррехинче Шупашкарта симĕс хуплашкаллă çӳхе кĕнеке те çырнă, хуплашки çинче кишĕрпе арбуз, помидор пур, çӳлерехре, кĕтесре,— ашшĕн сăнĕ. Ашшĕ вăл кĕнекене тирпейлĕ усрать, Кĕркурие вараласа пĕтерме хушмасть...

...Куçма тете хăйсен мăкла такине пусмалла пуль, тет. Кĕркури ашшĕ те виçĕмкун шăши хăлхаллă пĕр сурăха пуснăччĕ. Кĕркури сурăх хăмпине кĕлпе йăва-

ларĕ те, çӳхелсе çитсен, ăшне кантăр шăмми витĕр сывлăш тултарса урай тăрăх та, урамра та сĕтĕрсе çӳрерĕ. Анчах Кириле Ваççи ăна урипе таптарĕ те, хăмпă шаплатса çурăлсах кайрĕ. Кириле Ваççи килне тарса кĕчĕ...

...Куçма тете «Кайтарас-ха, çывăрас пулать» терĕ... Амăшĕ тĕпелте чуста хурса пĕтерчĕ — ыран ирех икерчĕ пĕçерет вăл... Кĕркурин те çывăрмалла, мĕншĕн тесен унăн ыран ирхине çутăлнă-çутăлманах тăмалла! Ах, мĕнле-ши вăл Шупашкар? Курасчĕ ăна хăвăртрах!.. Хăвăртрах çутăлтăрччĕ!..

...Машина çине туллиех арбуз тиенĕ. Çӳлте, кабина çумĕнчех, ашшĕ ларать. Кĕркурин шыв ĕçес килчĕ те, вăл конюхсем пурăнакан пӳрт енне чупрĕ. Çав вăхăтра машина хускалчĕ кайрĕ.

— Атте!— кăшкăрса ячĕ Кĕркури, анчах ашшĕ ахăлтатса çеç кулчĕ, машинăна чарма шутламарĕ те!

Йĕп-йĕпе тарласа кайнăскер, Кĕркури ыйхăран вăранса кайрĕ. Нимĕнле машина та çук — вăл хăй те вырăн çинчех выртать. Тулта автансем шарлаттарса авăтаççĕ... Кĕркури пуçне çĕклерĕ те чӳречесенчен кăшт кăна тĕксĕм кăвак çута кĕнине асăрхарĕ. Пĕр чӳречин каррине карман та, кĕленчи йăлтах тарласа кайни курăнать... Кăнтăрла пулсан, Кĕркури ун çине, паллах, шĕвĕр пӳрнипе йĕрлесе пӳрт е çын пуçĕ туса хуратчĕ ĕнтĕ...

Ăшă вырăн ăшĕнчен тухас килмест пулин те, Кĕркури çĕре анчĕ те, алăк патĕнчи пысăк калуша тăхăнса, тула тухрĕ, унтан каллех лакăштаттарса кĕчĕ те утиял айне чăмрĕ. Унăн питне татах «Вишун» сăмси перĕнсе кайрĕ, анчах хальхинче вăл типĕ те ăшă,— каçхинехи пек мар. Кĕркури урисене тăсса тутлăн карăнса илчĕ. Кĕтесри кравать çинче ашшĕ хăрлаттарса çыврать, тата сехет ывăнма пĕлмесĕр

шаккать. Картара Петюк ятлă автан хулăммăн авăтрĕ, ун хыççăн хăйăлтирех сассипе çăвăрри те авăтса ячĕ.

— Ҫиккирикук сар автан,
Мĕншĕн хытă авăтан?
— Ҫĕнĕ вите шур чултан
Туса пачĕç, тет автан...—

пăшăлтатса вуларĕ Кĕркури. Кӳ сăвва вăл нумай пулмасть кăна Кириле Ваççинчен вĕреннĕччĕ. Кириле Ваççи кăçал иккĕмĕш класра вĕренет ĕнтĕ.

...Кĕркури каллех чĕрне вĕçĕ таранах тăсăлса карăнчĕ. «Эпĕ ӳсетĕп»,— терĕ вăл хăй ăшĕнче, мĕншĕн тесен кун пирки вăл ашшĕнчен те, амăшĕнчен те илтнĕ. Карăннă чухне çын яланах ӳсет, тет...

Амăшĕ икерчĕ пĕçерет пулмалла, кăмака умĕнче тем чăшăлтата-чăшăлтата илет... Вут хутсан, Кĕркури кăмакари çулăм епле явăннине, кăвар епле симĕсĕн-кăвакăн шăранса ирĕлнине сăнаса тăма юратаканччĕ...

— Пит тутлă çывăрать, вăратас мар пуль,— илтет Кĕркури ашшĕн сассине. Ҫав сасă çывăхра та, аякра-аякра та пек туйăнать.

— Кайран йĕрсе пĕтĕ тата,— илтĕнет кăмака умĕнчен тепĕр сасă.

Кĕркури çакна пĕтĕмпех илтсе выртать, анчах ун пуçĕ те çĕкленмест, куçĕ те уçăлмасть. Кăмакара шăрт-шарт! туса вутă çунать, çуллă çатма çинче икерчĕ чăшăлтатать, ун шăрши утиял айĕнчен те сисĕнет... Акă ун пуçне такам алли сĕртĕнет...

— Кĕркури,— илтĕнет лăпкă сасă.— Кĕркури...

Кĕркури хăрах куçне уçса пăхать те «Ка-ай» тет, хутлансарах выртать. Хăй çумĕнче ашшĕ пĕкĕрĕлсе тăнине тĕлĕкри пек кăна курса юлать вăл.

— Пыратăн-и Шупашкара?

Шупашкар сăмаха илтсенех, Кĕркури пуçне ялт! çĕклет. Пӳртре çап-çутă, кăн-кăвак тĕслĕ ирхи янкăр çутă.

Ӑна ашшӗ икӗ хул айӗнчен тытать те «О-хо-хо-о!» тесе вырӑн ӑшӗнчен сӗтӗрсе кӑларать. Кӗркурипе пӗрле пӗчӗк «Вишун» та ҫакланса тухать, ҫӗре патлатса ӳкет. Ашшӗ Кӗркурие сывлӑшра ҫавӑркалать, лӑскать. Кӗркурин ыйхи самантрах таҫта кайса ҫухалать. Вӑл пӳрт тулли янратса кулса ярать те ашшӗне мӑйӗнчен ҫатӑрласа ыталать.

Сивӗ шывпа ҫӑвӑнма та
Юрататъ вӑл ирхине!—

тет те ашшӗ Кӗркурие лаххан тӗлӗнче ҫакӑнса тӑракан кӑкшӑм патне илсе каять. Кӗркури сивӗ шыва сирпӗте-сирпӗте ҫӑвӑнать, сирпӗннӗ шывӗ лаххана ҫеҫ мар, урайне те йӗпетет...

...Ӑна, «пӗчӗкскер шӑнса кайӗ» тесе, кабинӑна лартрӗҫ. Машина часах колхоз картишӗнчен кӗрлеттерсе тухрӗ. Кӗркури йӑл! кулса ячӗ те малалла пӑха пуҫларӗ. Машина ял ҫумӗнчи сарлака ҫулпа пырать. Ялта пӳрт мӑрйисенчен шӗвӗ тӗтӗм йӑсӑрланса тухать. Кӗркури икӗ хурӑн юнашар ӳсекен вырӑна тупрӗ те хӑйсен пӳртне те курчӗ. Вӗсен мӑрйинчен тӗтӗм тухма пӑрахнӑ.

Акӑ машина, аслӑ ҫул ҫинчен пӑрӑнса, ҫил арманӗ патне каякан ҫул ҫине тухрӗ. Ҫул икӗ енӗпе те хурала пуҫланӑ хӑмӑллӑ ана сарӑлса выртать. Арман авӑрмасть, ҫунаттисемпе лӑпкӑн каркаланса ларать...

Армантан иртсен инҫех те мар — Типҫырма. Ун урлӑ кӗперпе каҫмалла. Ҫырми ку чӑннипе — типӗ мар, унта туллиех шыв. Ӗлӗк вӑл типсе ларнӑ пулнӑ, тет, анчах пӗлтӗр ӑна колхоз пӗвеленӗ те халь ун шывӗнче пӳрт те пытанать, теҫҫӗ! Авӑ темӗн чухлӗ шап-шурӑ хур пӗр картана карталаннӑ та ҫырма еннелле шывра ишсе ҫӳреме каяҫҫӗ, хӑйсем пӗрре те какӑлтатмаҫҫӗ, мӑннӑн та канлӗн утаҫҫӗ.

Кӗпер урлӑ каҫсан, вӑрман курӑнса кайрӗ. Йывӑҫ ҫулҫисем саралнӑ, симӗссисем ҫук та. Тӗл-тӗл вара хӗп-хӗрлӗ ҫулҫӑллисем ҫиҫсе-йӑмӑхса юлаҫҫӗ. «Ах»— тет те Кӗркури чӑтаймасӑр Мишшинккие ҫанӑран тур-

тать. Мишшинккийĕ, шофер, руле пит лайăх çавăркалать, чăнк кăна ларса, пуçне тӳп-тӳрĕ тытса пырать. Час-часах тимĕр патаксене каллĕ-маллĕ туртать, урипе пускалать. Кĕркури йывăççем çине пăхма чарăнать те Мишшинккипе çумнерех сиксе ларать. Мишшинкки пиншакĕнчен бензин шăрши кĕрет, унăн шăлаварĕ те тĕлтĕл çупа хуралса-якалса пĕтнĕ.

— Кăшкăрт-ха,— ыйтать Кĕркури. Мишшинкки кăшкăртса кăтартать. Кĕркури татах кăшкăрттарасшăн, анчах тепĕр хут ыйтма именет. Вăл вара, куçне руль çинчен илсе, кантăк витĕр каллех малалла пăхма пуçлать те кабина чӳречи çинче сап-сарă вĕрене çулçи çыпçăнса пынине асăрхать. Вăл çав тĕле пӳрнипе тĕртсе пăхма çеç шутлать — вĕрене çулçи çилпе вĕçсе те каять.

— Кăшкăрт-ха!— ыйтать вăл хăй сисмесĕрех.— Ту-ту-ту-ут!— янăраса каять çавăнтах. Мишшинкки ун çине кулса пăхать, вара, хăрах аллине рульрен вĕçертмесĕр, кĕсйинчен пирус кăларать те шăрпăк чĕртет. Кабинăна пирус тĕтĕмĕ сарăлать. Кĕркури пружинăллă сак çинче сиккелесе илет.

— Çемçе вĕт?— ыйтать Мишшинкки.

— Çемçе-е!— тет Кĕркури.

Кайсан-кайсан, вĕсем чул сарнă яп-яка çул çине тухрĕç. Çул икĕ айккипех вăрман пек кашласа ӳссе кайнă йывăççем лараççĕ, симĕс, сарă, хĕрлĕ, хăмăр çулçăллă вĕсем халь — чăп-чăпар!

— Çакă ĕнтĕ вăл Шупашкар çулĕ! Ку çула тунăшăн чăвашсене Ленин орденĕ панă!— тет Мишшинкки.

Кĕркури ун çине тĕлĕнсе пăхать.

— Кур, епле нумай машина çӳрет кунта!— хушса хурать Мишшинкки, ун çине пăхмасăр.

Кунта, чăнах та, кашни минутрах машинăсем хирĕç пулаççĕ, кăшкăртса илеççĕ. Кĕркурисене хăваласа иртекен машинăсем те чылаях, хăшпĕрисенчен Кĕркурисем хăйсем те ирте-ирте каяççĕ. Пысăк автобус хирĕç пулчĕ — нăрă пек нăрлать, çăмăл автомобиль арбузлă грузовике самантрах хыçала хăварчĕ — пĕр

сассăр пынă пекех туйăнать. Грузовиксем час-часах тырă миххи тиенисем курăнаççĕ, тимĕр тиенисем те, пичке тавраш тиенисем те пур. Çул айккипе пысăк ялсем тăра-тăра юлаççĕ. Пĕр яла кĕрес чухне Мишшинкки машинăна чарчĕ те кустăрмасене тапкаласа пăхрĕ.

— Арбуз çиес теместĕр-и?— ыйтрĕ Кĕркури ашшĕпе пĕрле ларса пыракан Ванюк тете.

— Қас!— терĕ Мишшинкки. Ванюк тете пекĕпе пĕр арбузне çӳхе-çӳхе чĕл касрĕ те Мишшинккине тыттарчĕ, вара машина татах хускалса кайрĕ.

— Эсĕ мана вăррисене тасатса пар,— хушрĕ Кĕркурие Мишшинкки. Кĕркури арбуз вăррисене тасатать те чӳрече хушăкĕнчен тула пăрахать, унтан вĕсем Мишшинккипе иккĕш те пĕр харăсах пылак арбуза çиеççĕ.

— Мĕнпур чăвашĕпе те пирĕн колхоз çеç арбуз ӳстерет вĕт! Сан ачу маттур!— тет Мишшинкки, Кĕркури çине ăшшăн пăхса.

Ашшĕне мухтани Кĕркури кăмăлне каять, анчах вăл ун пирки нимĕн те шарламасть.

— Ай-яй! Пĕр алăпа тытсан та епле лайăх пырать!— машина тикĕс пынинчен тĕлĕнет вăл. Мишшинкки хавассăн кулать.— Вуннăмĕш çул ĕçлетĕп,— кăмăллăн калать вăл. Унтан куçне хĕсет те Кĕркурин картузне сылтăм аллипе туртса сăмси çине антарса лартать.

— Ну-у!— тарăхам пек тăвать Кĕркури, анчах хăй пĕрре те тарăхмасть.

— Час çитетпĕр-и?— ыйтать вăл, кабина чӳречинчен карăнса пăхса.

— Часах! Нумай юлмарĕ ĕнтĕ!— хуравлать Мишшинкки.

Чугун çул урлă каçсан, Шупашкар мĕнле пуçланса кайнине Кĕркури сиссе те ĕлкĕреймерĕ. Урам икĕ енĕпе икшер, виçшер, тăватшар хутлă çуртсем кая пуçларĕç.

— Ҫур, Чапаев палăкĕ!— хытă кăшкăрчĕ Мишшинки. Ҫулран инҫе те мар, тем ҫӳлĕш чалăшрах тăваткăл чул юпа ҫинче, лаша ҫине утланнă Чапаев курăнса кайрĕ. Ҫĕркури ăна тӳрех палларĕ. Чăнах та Чапаев! Аллине хĕҫ тытнă, хĕҫĕпе сулса ярас пекех туйăнать вăл.

Ҫĕркури кăкăрне, темле, ытлашши сывлăш кĕрсе тулнă евĕр пулса кайрĕ. Ҫун пек палăка вăл пĕрремĕш хут курать!

— Ну, куртăн-и ĕнтĕ,— ыйтрĕ Мишшинки.

— Куртăм, — чĕтренĕ евĕр тухакан сасăпа каларĕ Ҫĕркури. Чĕтренĕ евĕр тухмасăр ара! Вăл хăй те, йывăҫран тунă хĕҫ тытса, Чапаевла мĕн чухлĕ выляман пуль!..



— Чапаев Шупашкарта çуралнă! Ăна çынсем нихăçан та манмĕç, анчах пуринчен те ытларах унпа эпир мухтанма тивĕçлĕ, вăл пирĕн Шупашкарта çуралнă!— терĕ Мишшинкки мăнаçлăн, унтан машинине кăшкăртса илчĕ. Урам тăршшĕпех халăх хĕвĕшет, пĕр вĕççĕр машинăсем каллĕ-маллĕ иртеççĕ — шăв-шав, шăв-шав... Кĕркури хăйĕн умнелле те, сылтăмалла та, сулахаялла та пăхать — йĕркеллĕн нимĕн те уйăрса илеймест-ха. Машина анаталла çăмăллăн анать, анчах Мишшинкки руле кунта пурпĕрех асăрхануллăрах тытма тăрăшать — сисет-çке-ха ăна Кĕркури!

— Çакă вăл — Шупашкарăн аслă урамĕ, анчах эпир халь урăх урама пăрăнса кĕретпĕр, мĕншĕн тесен ку урампа пирĕнни пек машинăсене çӳретмеççĕ,— терĕ те Мишшинкки машинăна, чăнах та, урăх çулпа пăрса кĕртрĕ.— Ку урампа çăмăл машинăсемпе автобуссем çеç çӳреççĕ!— хушса хучĕ вăл.

Темиçе урампа, темиçе хут пăрăна-пăрăна пырса, вĕсем пасара çитрĕç. Арбуза йăлтах сутмалли вырăна пушатрĕç.

Пасар уçăлнă ĕнтĕ, халăх кунта самаях пухăнма ĕлкĕрнĕ. Арбуз тиесе килнине курсан, çынсем Кĕркурисен лавкки патне самантрах пуçтарăнчĕç. Акă симĕс пальто тăхăннă лутрарах майрапа кăвак плащлă арçын килсе тăчĕç. Майрин аллинче сăран сумкка, арçыннин аллинче — сетка. Сеткинче вара — тĕлĕнмелле!— виçĕ автан лараççĕ, виççĕшĕ те хăйсем шурă, киккирикĕсем кăна вут пек çунаççĕ.

— Мĕншĕн кулан, интереслĕ-им?— ыйтать Ванюк тете.

— Пăх-ха, автанĕсене ăçта чиксе хунă!— пӳрнипе тĕллесе кăтартать Кĕркури.

— Хулара çапла çав вăл...— Кĕркури пекех кулкаласа калать Ванюк тете.

Симĕс пальтоллă хĕрарăм çав вăхăтра арбуз суйлать. Арбузĕсем килĕшмеççĕ пулас ăна, вăл темиçе тĕрлине тыта-тыта пăхрĕ.

— Ывăл ача, çав чи пысăккине пар-ха!— Кĕркури çине пăхса калать арçынни. Кĕркури вăр-вар тăрать те хăй патĕнчи чи пысăк арбуза мекĕçленсе йăтать.

— Пит паха! Маттур!— тет арçынни, вара арбуза виçме хушать.

Кĕркури каллех хăй вырăнне вырнаçса ларать те арбуз мĕнле сутнине пăхать. Çынсем арбуз туяннине пăхса тăма интереслĕ иккен. Уйрăмах ăна шурă плащпа хăмăр шлепке тăхăннă лутрарах çын кăмăла кайрĕ. Çынни хуп-хура куçлă. Вăл уçă лавкка патне чăвашла тумланнă икĕ хĕрпе пĕрле пычĕ те аллине хавассăн çĕклерĕ.

— О, куратăр-и, халăх,— кăшкăрса ячĕ çавăнтах.— Хамăр чăваш арбузне сутаççĕ кунта. Халăх! Туянăр, туянăр çак арбуза, ăна таçтан тиесе килмен. хамăр çĕр-анне çинче хамăр чăвашсем ӳстернĕ. Нуккă, Маюк, нуккă, Санюк! Суйлăр-ха чи лайăххисене!

Вăл чи пысăк арбузсене виçтерчĕ те мĕнле шавласа килнĕ, çавăн пекех шавласа, айккинелле пăрăнса кайрĕ...

— Ай, мыскараçă та!— пуçне сулкаларĕç Ванюк тетепе Кĕркури ашшĕ. Мыскараçă кăшкăрашнипех пулас, арбуз патне çынсем черетпех йĕркеленсе тăчĕç. Пурте: «Чăваш арбузне туянатпăр!»— терĕç.

Çуррине яхăн сутсан, Кĕркури ашшĕ Ванюк тетене:— Эпир Кĕркурипе иксĕмĕр Павăл Иванчсем патне кайса килер-ха, эсир кунта Мишшинккипе иксĕр юлăр,— терĕ. Павăл Иванч текенни хăйĕн ашшĕпе пĕр тăван пиччĕшĕ пулнине Кĕркури пĕлет. Вăл тахçантанпах Шупашкарта пурăнать, çурт-йĕр тăвакан çĕрте ĕçлет. Пĕрре яла та пырса кайнăччĕ — Кĕркури ăна астăвать-ха.

Кĕркури ашшĕ Павăл тетĕш валли кучченеçлĕх икĕ пысăк арбуз илсе хул хушшине хĕстерчĕ те:

— Пасартан тухиччен иçĕм çырли çисе пăхар,— терĕ.

— Ăçта!— хавасланса кайрĕ Кĕркури. Вăл иçĕм

çырли çисе курнă, пěр эрне каялла кăна-ха ăна Кириле Ваççи пилěк пěрчě панăччě. Ваçça ашшě ăна хуларан илсе килнě иккен. Çырлийě симěс тěслě кăначчě, хăй калама çук пылак вара!

Вěсем тем пысăкăш курпун сăмсаллă та хуп-хура мăйăхлă çынран пěр пысăк çупкăм исěм çырли туянчěç.

— Исěм çырли симěс вěт, ку мěншěн хура?— тěлěнчě Кěркури.

— Хури те пулать, симěсси те пулать,— ăнлантарчě ашшě.— Çисе пăх-ха, мěн тути калать?

— Тутлă-ă!

— Çапла çав... Анчах пирěн патăрта ўстерме йывăр-ха ăна...

— Мěншěн йывăр ăна ўстерме?

— Мěншěн тесен пирěн патăрта ăшă çителěксěртерех, ку вара ăшша ытларах юрататъ. Атя-ха, лере ав тата аçтăрхан мăйăрě пур, ăна та кăштах тутанса пăхар...

— Атте!

— Мěн-ха, Кěркури?

— Мана аçтăрхан мăйăрě кирлě мар... Тепěр çупкăм исěм çырли ил-ха... Аçтăрхан мăйăрне эпě темиçе те çинě...

Ашшě хирěçлемерě, тепěр çупкăм исěм çырли илсе пачě. Курпун сăмсаллă хура çын вара Кěркури çине кулкаласа пăхрě, сăмса витěр тем мăкăртатрě, унтан çырлине те, çăмлă аллипе илсе, Кěркурие хăех тыттарчě.

— Хорош малчик,— терě вăл, çавна май хура куçěсене çиçтерсе. Ку мěне пěлтернине Кěркури ăнланать, «Кěркури — лайăх ача» тенине пěлтерет вăл!..

Ну, мěнех вара, Кěркури, чăнах та, начар ача мар, ашшě те ăна час-часах маттур! тет. Ахаль пулсан исěм çырли те туянса паман пулěччě, Шупашкара та илсе килмен пулěччě!..

Павăл тетěш патне çитиччен çула май вěсем универмага кěрсе Кěркури валли çěлěк илме шутларěç.

Универмаг текенни вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк лавкка пулчĕ, унта кĕрсен куç-пуç чăнахах та алчăраса каймалла: хăй тата икĕ хутлă! Кĕркурие ашшĕ тӳрех иккĕмĕш хута илсе хăпарчĕ. Сап-сарă çӳçлĕ пĕр аппа, кăвак халат тăхăннăскер, Кĕркури ашшĕне пĕчĕк хămăр çĕлĕк тыттарчĕ.

— Тăхăнса пăх-ха!— хушрĕ Кĕркурие ашшĕ.

Кĕркури çемçе тиртен çĕленĕ çĕлĕке савăнса тăхăнчĕ.

— Хĕстермест-и?— ыйтрĕ унран ашшĕ.

— Çук!— тӳрех пĕлтерчĕ Кĕркури.

— Эсĕ лайăххах тĕрĕсле-ха, хĕстерет вĕт?— тепĕр хут ыйтрĕ ашшĕ. Кĕркури хĕстермест тесе тепĕр хут каларĕ пулин те, ашшĕ çĕлĕке хывма хушрĕ.

— Тепĕр виçе пысăкраххине парăр-ха,— ыйтрĕ вăл кăвак халатлă аппаран. Лешĕ çавăн йышшиех тепĕр çĕлĕк кăларса пачĕ.

— Тăхăн-ха, ку епле пулать,— хушрĕ ашшĕ.

— Ку тата лайăххах, пĕрре те хĕстермест!— кăшкăрчĕ Кĕркури.

— Апла пулсан, çакна туянăпăр та!— терĕ ашшĕ



кулкаласа, вара халатлă аппана укçа пачĕ. Лешĕ те Кĕркури çине пăхса ăшшăн кулчĕ.

— Ку магазинта этеме мĕн кирлĕ, çавсем пурте пур,— мăнкăмăллăрах каларĕ ашшĕ, унтан Кĕркурие хăй хыççăн пыма хушрĕ. Кĕнекесемпе çимеллисене çеç урăх магазинта сутаççĕ. Халь пăхса çӳреместпĕр-ха, Павăл тетӳ патне васкас пулать.

Вĕсем вара васкасах урама тухрĕç.

Павăл тетĕшĕ тăвата хутлă пысăк çуртра пурăнать иккен. Хăй вăл куçлăх тăхăннă, сĕтел хушшинче пĕччен тем çырса ларать. Хăнасем килнине курсан, сĕтел хушшинчен тăчĕ те аллисене саркаласа çинçе сасăпа: «У-у!»— терĕ, унтан куçлăхне хывса пăрахрĕ, вара тӳрех алăк патнелле чупса пычĕ.

— Епле майпа, хăçан çитрĕр?— ыйтрĕ хăй тӳрех, вара Кĕркури ашшĕн аллине тытса чăмăртарĕ.— Çамрăк çын тата мĕнле пурăнать-ха?— çавăнтах Кĕркури патне пĕшкĕнсе ыйтрĕ вăл, унтан ăна та алă пачĕ.— Çĕнĕ çĕлĕк туяннă-çке! Ну, атьăр, атьăр, иртĕр тĕпелелле! Тумтирсене ак çакăнта хывса çакăр...

Кĕркури ашшĕ:— Ирхине çитрĕмĕр, арбуз сутатпăр-ха,— терĕ те, алăк патĕнчи тенкел çине хунă икĕ арбуза каялла илсе Павăл тетĕшне пачĕ.— Ку сирĕн валли кучченеç пекки пултăр,— терĕ.

— Тĕлĕнмелле!— аллисене саркаларĕ Павăл тете.— Тавтапуçах апла кучченеçшĕн!— Вара арбузсене илчĕ те çавăнтах шалти пӳлĕме йăтса кĕрсе кайрĕ.

Кĕркурипе ашшĕ салтăнса тĕпеле иртрĕç.

— Мĕн чухлĕ кĕнеке!— стена çумĕнчи темиçе хутлă сентресем çине мачча таранах хурса тухнă кĕнекесене кăтартса каларĕ Кĕркури, унтан пуçне çĕклерĕ те чаплă пӳрт ăш-чиккине йĕри-таврах пăхса çаврăнчĕ.

...Çаврака сĕтел хушшинче апат çисе, чей ĕçсе пĕтерсен те, Павăл тетепе Кĕркури ашшĕ чылайччен калаçса ларчĕç. Кĕркури ашшĕ хула пирки мухтанса

каларĕ:— Палламалла мар ӳсет Шупашкар! Куç умĕнчех ӳсет!— терĕ.

— Ĕçлетпĕр ĕнтĕ, тăрăшсах ĕçлетпĕр, çурт хыççăн çурт тăватпăр!— текелерĕ Павăл тете.

Анчах кунта ним кĕтмен-туман çĕртен çакăн пек япала пулса тăчĕ: Кĕркури ашшĕ «кайтарар пуль» тесе калаçма çеç тытăннăччĕ, Павăл тете: «Кĕркурие хăвар ыранччен!»— терĕ хучĕ.

Ашшĕ пĕрре Кĕркури çине, тепре Павăл тете çине пăхкаласа илчĕ те: Юлатăн-и ыранччен Павăл тетӳ патне?— тесе ыйтрĕ.

— Ыран килетĕр-и вара? Килмесен?..— иккĕленерех каларĕ Кĕркури.



Юлассипе юлмасси çинчен вăл халлĕхе хăй те нимĕн те пĕлмерĕ-ха.

— Килетпĕр çав, паллах, килетпĕр.

— У, апла пулсан — пулчĕ те!— хавхалантарчĕ Павăл тете.— Эпир санпа





кинона та кайса килĕпĕр. Музея кĕрсе курăпăр, унта упасем, пăлансем пур.

Кĕркури çапла хăй сисмесĕрех хулара Павăл тетĕш патне пĕр кунлăха юлчĕ.

— Халь эпир санпа, çамрăк çын, çулçӳреве тухатпăр,— терĕ тепĕр çур сехетрен Павăл тетĕш ăна.— Пиншакна тăхăн, картузна тăхăн, эпĕ те тăхăнатăп. Икĕ сехет çитмен-ха, эпир санпа кино кайса курăпăр. Пĕлетĕн-и, Кĕркури, эпĕ юлашки вăхăтра питĕ нумай ĕçлерĕм, çапла ĕçленине пула ывăнтăм. Манăн халь паян кăштах канмалла!— Павăл тете картузпа кĕске пиншак пекки тăхăнса ячĕ те, вара вĕсем пӳртрен тухса алăка тул енчен питĕрчĕç.

— Ну, мĕнле, Шупашкар кăмăла кайрĕ-и?— ыйтрĕ Павăл тете.

— Кайрĕ!— савăнса хуравларĕ Кĕркури.

— Çапла пулмасăр! Вăл чăвашсен тĕп хулиçке-ха! Атăл мĕнле пек?

— Эпĕ курман çав ăна.

— У-у!— çинçе сасăпа кăшкăрчĕ Павăл тете.— Мĕнле-ха аçу Атăла кăтартайман сана? Атăл — чăвашсен, Шупашкарăн илемĕ. Ун тăрăх пысăк пăрахутсем çӳреççĕ. Чим-ха, эпĕ сана çавăтсах пырам-ха... Эпир автобуспа каймастпăр. Хулара уçă сывлăша ахаль те сахал лекетĕн... Вулама пĕлетĕн-и-ха?

— Саспаллисене пĕлетĕп, хутăштарма лайăх пĕлместĕп.

— Ак çакăнта «Атăл» гостиница тесе çырнă. Куратăн-и? Мĕнле пек? Хитре çурт вĕт, э?

— Хитре...

— Унта ялсемпе ытти хуласенчен килекен хăнасем çĕр выртма пултараççĕ. Атăл хĕрринче ун пекки тепĕр çурт пур —«Хресчен çурчĕ» ятлă. Часах эпĕ сана Чапаев вĕреннĕ шкул çуртне те кăтартăп. Чапаев палăкне куртăн-и тата?

— Куртăм. Лаша çине утланнă, хĕçпе! Итле-ха, Павăл тете, Чапаевăн лаши те путнă-и?

— Çук, лаши путман, вăл хăй çеç путнă.

— Хĕçĕ шыва путнах пуль вара?

— Хĕçĕ те путман. Ун чухне вăл наганпа кăна пулнă...

Вĕсем, тепĕр урама пăрăнса, кĕпер урлă каçрĕç те нумай та каймарĕç, чарăнса тăчĕç.

— Çак пĕчĕкçĕ йывăç çуртра ĕлĕк шкул пулнă ĕнтĕ, унта Чапаев вĕреннĕ,— терĕ Павăл тете.— Мрамор хăма çине ун пирки çырсах хунă! Сирĕн ял шкулĕ пысăк-и?

— Пысăк. Икĕ хутлă!

— Ĕлĕк, патша вăхăтĕнче, хулари шкулсем те, ав, мĕн пысăкăш çеç пулнă!

Çав тери паттăр Чапаев çакăн пек пĕчĕк те пĕр хутлă шкулта вĕреннине Кĕркурин ĕненес те килмерĕ, анчах вăл нимĕн те шарламарĕ.

— Часах Атăл куратпăр!— малалла хускалса каларĕ вара Павăл тете.

Атăл хĕрринчи чул карта патне çитсе тăрсан, Кĕркури кăкăрне каллех сывлăш тулса ларнăн туйăнчĕ, унăн чĕри хăвăртттăн-хăвăрттăн тапса ячĕ. Мĕн сарлакăш вăл! Лăпкăн, мăнаçлăн юхса выртать хăй. Атăл çинче пĕрре те лăпкă мар — пысăк юханшыв



кӗрлет, шавлать, шывӗ лӑпкӑ юхать пулин те, кунта питӗ шавлӑ. Ҫирафа майлӑ темле машинӑсем баржӑсем ҫинчен пысӑк ещӗксем, ҫӗршер нумай-нумай михӗсем, вӗтӗ чул, хӑйӑр пушатаççӗ. (Çав чулпа хӑйӑра Павӑл тетесем валли турттарса килеççӗ иккен, Павӑл тетесем унпа çурт тунӑ чух усӑ кураççӗ.) Пӗчӗк пӑрахутсем Атӑл урлӑ каллӗ-маллӗ каçаççӗ, моторлӑ кимӗсем пӗр саслӑн кӗрлеттерсе ишеççӗ, хӑй тӗллӗн çӳрекен пысӑк баржӑсем кӑшкӑртаççӗ, шыв хӗррине машинӑсем ана-ана хӑпараççӗ. Пристань текенни патӗнче халӑх хӗвӗшет, таçта сывӑхрах музыка калани янӑраса тӑрать.

— Атӑл ӗçлет!— тет Павӑл тете.— Хӗле кӗриччен çапла ӗçлет вӑл,— тет.— Куратӑн-и мӗн чухлӗ тавар пушатаççӗ, мӗн чухлӗ тавар тиеççӗ! Лере те, ав, анатарах, мӗн пысӑкӑш крансем лараççӗ. Шупашкар халь ӗнтӗ пысӑк фабрик-заводлӑ хула. Çӗнӗрен мӗн чухлӗ заводсем тӑваççӗ. Çавсем валли кирлӗ япаласене Атӑл шывӗ тӑрӑх турттарса килеççӗ те ӗнтӗ. Куратӑн-и, анатарах, сӑртлӑ çыран хӗрринче, тем пысӑкӑш вӑрӑм çуртсем ретӗн-ретӗн ларса тухнӑ. Çавсем вӗсем — пир-авӑр фабрикисем, унта çип арлаççӗ, пир тӗртеççӗ, пусма-тавар туса кӑлараççӗ. Сан çири кӗпене те çавӑнта туса кӑларнӑ пусмаранах çӗленӗ ӗнтӗ... Сан урунти носкипе ботинкуна та Шупашкартах туса кӑларнӑ пуль, кунта вӗсене тӑвакан фабрикӑсем те пур.

...Кӗркури Атӑл çине, сӑртран аллаппи çинчи пек курӑнакан шурӑ çуртсемлӗ хула çине хавхаланса пӑхать. Павӑл тете вара каласма чарӑнать те: çӳлерех хӑпарса анар-ха!— тет. Кӗркурие çавӑтса, сӑрталла утма пуçлать. Атӑл хӗррине тӑршшӗпех тем пысӑкӑш йӑрансемпе хӗрлӗ-сарӑ çеçкесем лартса тухнӑ, çарала пуçланӑ çӑкасем ретӗн-ретӗн лараççӗ. Хула урамӗсенче кунта пур çӗрте те çӑка йывӑççисем ӳсеççӗ, урӑхла йывӑççем курӑнсах та каймаççӗ.

— Атӑл урлӑ утса каçма миçе утӑм пулать-ши?— ыйтать Кӗркури.

— Миçе утăм? Сан утăмупа виçĕ пин утăм,— тет Павăл тете.

Кĕркури виçĕ пин утăма ăнлансах çитереймерĕ курăнать, çамкине пĕркелентерсе илчĕ.— Пирĕн ял тăршшĕ пуль ĕнтĕ,— терĕ вăл шухăшлăн.

Сасартăк анатарах темскер вăрăммăн кăшкăртса ячĕ. Кĕркури чăнкă çыранра çаврăнса пăхрĕ те — тем пысăкăш, темиçе хутлă шап-шурă пăрахут ярăнса хăпарнине курчĕ. Вара вĕсем çав пăрахут икĕ хутлă капăр пристань патне çитсе чарăничченех Атăл хĕрринчен каймарĕç. Пăрахут çинче радиопа чаплă юрă юрлаттараççĕ. Чăматансем, кутамккасем йăтса, çынсем тухаççĕ, çынсем кĕреççĕ.

— Пăрахутсем пысăк пӳрт майлах,— тет Кĕркури,— анчах мĕнле ишеççĕ-ха вĕсем?

— Вĕсен кустăрмисем пур, шывра çав кустăрмасемпе çаврăттарса ишеççĕ,— хирĕç тавăрать Павăл тете, унтан Кĕркурие куçран пăхать те:— Тепĕр çул Атăла Шупашкар тĕлĕнче те пĕвелеме пуçлатпăр ĕнтĕ!— тесе хушса хурать.

— Атăла-и?!— тĕлĕнет Кĕркури.

Павăл тетĕш вара ăна Сталинградпа Куйбышев патĕнчи пĕвесем çинчен каласа парать. Çавăнта Атăл кунти пек виçĕ пин утăм сарлакăш çеç мар, çыранĕсем



курӑнмиех сарӑлса кайнӑ иккен, унта тӗнчере чи пысӑк электростанцисем ӗҫлеҫҫӗ...

Ҫӗркури хӑйсен ялӗ ҫумӗпе юхса выртакан Сивлек ятлӑ юханшыва колхозниксем пӗрре мӗнле пӗвеленине аса илчӗ. Анчах кайран питӗ вӑйлӑ ҫумӑр ҫурӗ те ҫав пӗвене самантрах татса кайрӗ. Сивлек шывӗ — пӗчӗк шыв ҫеҫ. Ӑна пӗвелеме пулать-ха, колхозниксем ҫапла турӗҫ те — тепӗр хут пӗвелерӗҫ. Анчах Атӑл ытла та пысӑк вӗт! Ҫук, ҫук, ӑна пӗвелеме май пуррине Ҫӗркурин ниепле те ӗненес килмест.

— Совет ҫыннисем, Ҫӗркури, тем те тӑваҫҫӗ, ун пеккине ҫеҫ мар, унтан чаплӑ ӗҫсене те тӑваҫҫӗ,— ӑнлантарать ӑна Павӑл тетӗшӗ. Ӗненес килмест пулин те, Ҫӗркури вара ӗненет.

Атӑл хӗрринче ҫӳресе, Ҫӗркурипе Павӑл тетӗш кинона каяймасӑрах юлчӗҫ. Ачасене кунта икӗ сехет иртнӗ хыҫҫӑн кинона кӗртмеҫҫӗ иккен. Павӑл тетӗш вара ӑна Атӑл хӗрринчи пӗчӗк сада илсе кӗртсе «Тимӗр тылӑ» ҫыракан Иванов палӑкне кӑтартрӗ те хулана каялла илсе кайрӗ. Кино кӑтартакан ҫурчӗ те Атӑл хӗрринчех капмаррӑн капӑрланса ларать. Ҫӗркурисен ялӗнче те, клубра, час-часах кино кӑтартаҫҫӗ, анчах вӗсен клубӗ, ҫак ҫуртпа танлаштарсан, кача пӳрне пек ҫеҫ туйӑнать. Кунта сакӑрҫӗр ҫын пӗр харӑс кино курать, тет. Вӑл Ҫӗркурисен ялӗнчи мӗнпур ҫын чухлӗ пулать имӗш.

— Упасем куратпӑр-и, Павӑл тете?— кино курайманнишӗн пӑшӑрханнине иртерсе ярас тесе ыйтрӗ вара Ҫӗркури.

— Мӗнле упа?— тӗлӗнчӗ Павӑл тетӗш.

— Ара эсӗ таҫта упасем, пӑлансем пур терӗнҫке-ха...

— А-а,— аса илчӗ Павӑл тетӗш.— Куратпӑр. Куратпӑр. Унта упасемпе пӑлансем ҫеҫ мар, урӑх япаласем те нумай.

Кӑштах утсан, вӑл урамран пӗр алӑка уҫрӗ те ҫаврака тӑрӑллӑ ҫӳлӗ ҫурт патнелле утрӗ.— Ак ҫакӑ ӗнтӗ вӑл, музей текенни...— терӗ.

Кĕркури халиччен упа та, пăлан та курман-ха, вĕсене картинкăсем тăрăх çеç пĕлет, çавăнпа музея питĕ хумханса кĕчĕ. Часах вăл хăмăр упине те, туратлă пысăк мăйракаллă пăланне те, сăрă кашкăрне те, тĕрлĕрен вĕçен кайăксене те курса тĕлĕнчĕ, анчах вĕсем пĕри те чĕррисем пулмарĕç, вилнĕскерсем ăшне чӳпĕк тултарнисем çеç пулчĕç. Апла пулин те, Кĕркури питех пăшăрханмарĕ. Чĕррисем пулнă пулсан, паллах, аванрахчĕ ĕнтĕ.

— Павăл тете, çак упасене ăçтан тытса килнĕ-ши?— ыйтрĕ Кĕркури вырăнтан хускалаймасăр.

— Вĕсене пурне те чăваш республикинче тытнă,— терĕ Павăл тете.— Çав вăрăм уралла тăрнасене те, пăрăнтăкне те, тукмак хӳре кашкăрне те чăваш çĕрĕнче тытнă. Çак музейра мĕн пур — пурте чăвашсен...

Музейра Кĕркури питĕ нумай япала курчĕ: тем тăршшĕ мамонт шăммисем, питĕ пысăк чансем, ĕлĕкхи тупă кĕпçисем, чăн-чăн пекех курăнакан пĕчĕк ялсем, картинăсем... Иккĕмĕш хута хăпарсан вара вĕсем Кĕркурисен колхозĕнчен илсе килнĕ кантăр çурăмне курчĕç. Çырса хунине Павăл тетĕш сасăпах вуларĕ — чăнах та Кĕркурисен ялĕнчен илсе килнĕ! Кантăр çурăмĕ Кĕркурисен çурчĕ çӳлĕш кăшт çеç пулаймасть, йывăç пек вăрăм ӳснĕ!

— Ав епле чаплă сирĕн колхоз, сан аннӳпе ытти хĕрарăмсем ӳстернĕ кантăра музейра усраççĕ!— мухтаса каларĕ Павăл тетĕш. Çак сăмахсене илтсен, Кĕркури хăй ăшĕнче хăйсен ялĕшĕн, колхозĕшĕн чунтанах хĕпĕртерĕ, унăн пĕчĕк кăкăрĕнче темĕнле ăшă хум ыррăн чупса иртнĕн туйăнчĕ.

Музейран тухсан, Кĕркурие Павăл тетĕш хула паркне илсе кĕчĕ. Хула паркĕ — Хĕрлĕ площадь текенни патĕнче.

Площадь варринче темскер пĕрре симĕс, тепре сарă тĕслĕ çуталса ларатчĕ те, Кĕркури ун пирки те Павăл тетĕшĕнчен ыйтса пĕлчĕ.

Ăна светофор теççĕ иккен. Вăл машинăсене йĕр-

келлĕ çӳреме пулăшаканни. Сарă тĕслĕ çутă çунсан, машина малалла каяймасть, симĕс тĕслĕ çунсан — каять. Çак светофор çук пулсан, машинăсем пĕр-пĕринпе çапăнма та пултарĕччĕç. Ķайран Кĕркури асăрхарĕ: светофорсем хулара ытти çĕрте те пур.

Парка кĕрсен, кунта утса çӳремелли сукмаксем çине сап-сарă хăйăр сапса тухнине курчĕ Кĕркури. Сукмаксен хĕрринче чечексем лартнă пулнă, кĕркунне çитнĕ пулин те — вĕсем пачах та шанман-ха. Йывăçсем кунта çӳлех мар, çинçе йышши вĕренесем нумай.

Парка кĕнĕ çĕрте чулран тунă икĕ çын тăраççĕ. Кусем, Павăл тете каланă тăрăх, тимĕр шăратаканпа çурт-йĕр тăвакан иккен.

Хула паркĕнче пĕр çĕрте пысăк кăруççель çаврăнать; Кĕркури ялта, ярмăркка пулнă чух, кăруççельпе ярăннăччĕ, анчах унти кăруççель пĕчĕккĕ, тата ăна шалтан çынсем тĕртсе çаврăнатчĕç. Ку вара хăй тĕллĕнех çаврăнать!

— Ларатпăр-и?— ыйтрĕ Павăл тете.— Хăрамастăн-и ларма?

— Çу-ук! Эпĕ хамăр ялта ярăнса курнă!— çĕмилленсе каларĕ Кĕркури.

Павăл тете вара укçа тӳлесе икĕ билет илчĕ те, вĕсем кăруççель чарăнасса кĕтме пуçларĕç.

Кăруççелĕн хăмаран тунă таянса лармалли сăпкисем çине икшерĕн-икшерĕн лараççĕ. Кĕркури малтанах, хытă çаврăнма тытăнсан, кăшт шикленчĕ, анчах часах хăнăхрĕ. Кайран, ярăнса пĕтерсен, вăл:— Хытă çаврăнма пуçласан та, пĕрре те хăрамарăм!— терĕ.— Кунта ялтинчен хăвăрт çаврăнать иккен. Нумайрах та çаврăнать!..— хушса хучĕ кăшт тăрсан.

...Хула паркĕнчен инçе мар ачасен паркĕ пур, анчах унта Кĕркури кĕрсе кураймарĕ, мĕншĕн тесен ачасен паркне, лайăхрах карта тытса илемлетес тесе, темиçе кунлăха хупнăччĕ. Унта ачасем кунĕпех выляма пултараççĕ, тет. Хĕлле вара, çĕнĕ çул çитсен, пысăк

ёлка лартаççĕ те ăна тем тĕрлĕ çутăпа та илемлетеççĕ, ачасем тăвайккисем çинчен пĕчĕк çунасемпе ярăнаççĕ.

— Ав, куратăн-и, мĕнле кĕлеткесем курăнаççĕ унта!— терĕ Павăл тете.

Кĕркури карта хушăкĕнчен горн, ялав, параппан тытнă ачасен кĕлеткисене курчĕ.

Малалла вĕсем автобуспа кайрĕç. Автобус çине ларасшăнни Кĕркури пулчĕ. Халиччен вăл автобуспа ярăнса курманччĕ-ха, çавăнпа та:— Павăл тете, атя-ха автобуспа ярăнар!— терĕ.

Павăл тетĕш:— Автобуспа мар, эпĕ сана «Волгăпа», çăмăл машинăпа, ярăнтарам-ха!— терĕ.

Кĕркури самантрах хирĕçлерĕ:— Эпĕ «Волгăпа» ярăнмастăп, эпĕ унпа ярăнса курнă, пирĕн ялта ун пекки пур!— терĕ.

— У-у!— куçхаршисене çĕклентерсе илчĕ Павăл тетĕш.— Пăххалĕ эсĕ ăна, «Волгăсемпе» те ярăннă та вăл!— Вара Кĕркурие автобус чарăнакан çĕре çавăтса кайрĕ.

Автобус çинче Кĕркури ура çинчех тăрса пычĕ, мĕншĕн тесен ларма унта вырăн çукчĕ. Павăл тетĕшне



пĕри ларăр тесе сĕнчĕ, анчах Павăл тете:— Эпир часах тухатпăр, хăвăрах ларăр ĕнтĕ,— тесе, лармарĕ.

— Советсен çурчĕ!— пĕлтерчĕ автобус çинче билет сутаканни. Кĕркурипе Павăл тетĕш вара автобус çинчен анчĕç.

Ун умĕнче — тем пысăкăш капмар палăк курăнса кайрĕ.

— Ленин!— терĕ Кĕркури тӳрех. Унтан чарăнчĕ те чылайччен хускалмасăр тăчĕ. Кĕрхи уяр тӳпере катрам-катрам шурă пĕлĕтсем шăваççĕ, айккинчен пăхсан, Ленинăн пысăк та мăнаçлă палăкĕ çав пĕлĕтсем айĕнче пушшех те чаплăн курăнать... Кĕркурин чун-чĕри хăпартланчĕ, çĕкленчĕ, вăл хăй вырăнĕнче çаплах хускалмасăр тăчĕ...

— Мĕнле пек?— ыйтрĕ Павăл тетĕш.

Кĕркури ним те чĕнмерĕ, тем çинчен питĕ тимлĕн шухăшланă пек курăнчĕ вăл. Кăшт тăрсан, кĕтмен çĕртен:— Павăл тете, палăксене мĕншĕн çавăн пек пысăк тăваççĕ?— тесе ыйтрĕ.

Павăл тетĕш ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ, тӳрех ним те каламарĕ.

— Ленин хăй çакăн пысăкăш пулман вĕт-ха?— çаплах тĕпчерĕ Кĕркури.

Павăл тетĕш вара самантрах хавхаланса кайнă пек пулчĕ те:

— Ленин-и?— терĕ.— Ленин кун пек кăна мар, кунтан вунă хут, çĕр хут пысăк пулнă. Ленин хăйĕн ăс-хакăлĕпе, шухăшĕпе пĕлĕте перĕнекен улăп пулнă!.. Ăнланатăн-и?

— Ăнлантăм,— терĕ Кĕркури. Анчах хăй ăшĕнче пурпĕрех: «Палăксене хитре пултăр, аякран курăнтăр тесе çех çавăн пек пысăк лартаççĕ»,— тесе çирĕппĕн шутласа хучĕ.

Анчах Павăл тетĕш калани те ун кăмăлне кайрĕ.

— Çав пысăк çурта — Советсен çурчĕ, теççĕ, ав çавă — учительсем кăларакан институт, çакă вара — агрономсене вĕрентекен институт. Ăна эпĕ хамăн юлташсемпе тунă,— сăмаха урăххи çине куçарчĕ Павăл

тетёш.— Çав институтсенче темиçе пин çын вĕренет, вĕренсе тухсан, вĕсем тĕрлĕрен хуласене, ялсене саланаççĕ,— хушса хучĕ кăшт тăрсан. Унтан:— Ӳссе çитĕнсен, эсĕ те кунта вĕренме килĕн-ха!— терĕ.

Кĕркури нимĕн те шарламарĕ, тăвата хутлă та тем пысăкăш институт çурчĕсене сăнаса пăхнă май, хăй хăçан ӳссе çитесси çинчен шухăшларĕ, анчах хăçан ӳссе çитессине тĕплĕнех ăнланса çитерейменрĕ. Çапах та çав кун, хăй пысăк пулас кун, уншăн ытла аякрах та мар пек туйăнчĕ.

— Халь сан валли кĕнекесем туянăпăр, хитре кĕнекесем,— вăл мĕн çинчен шухăшланине ăнланнă пекех каларĕ Павăл тетĕш.— Ну, утрăмăр малалла, пĕчĕк çулçӳревçĕ!— Вĕсем вара урам урлă каçса кайрĕç. Машинăсемпе автобуссем питĕ нумаййăн çӳренипе урам урлă каçма çăмăлах та мар иккен, таптаса каяссăнах туйăнать. Утса çӳреме те кунта ирĕклĕ мар, урам икĕ енĕпе пĕр вĕçĕмсĕр халăх каллĕ-маллĕ кумать — тĕртсе е çапăнса йăвантарас пекех. Анчах апла пулин те Кĕркурие пĕр çын та çапăнмарĕ-ха, хăшпĕрисем çеç çăмăллăн сĕртĕнсе иртеççĕ.

Кĕркури сасартăк тем аса илнĕ пек пулчĕ те кĕтмен çĕртен чарăнса тăчĕ.

— Павăл тете,— терĕ вăл пуçне каçăртса,— эпĕ паçăр Атăл хĕрринче, хайхи пир тĕртекен çуртсем патĕнче, икĕ юпа куртăм — çӳлĕ юпасем. Мĕн тума лартнă вĕсене?

— Вĕсене-и? Вĕсем — радио юписем,— тӳрех ăнлантарма пуçларĕ Павăл тетĕш.— Çав юпасене çӳлтен пралукпа карнă...

— Карнă çав!..

— Çав пралук ĕнтĕ радиопа калаçнине инçете сапалать. Шупашкарта калаçни вара сирĕн ялта та, Мускавра та илтĕнет... Чим-ха, эпĕ сана тепĕр юпа кăтартам... Атя-ха çав çурт хыçне...

Тăвата хутлă чул çурт хыçĕнчен Павăл тетĕш Кĕркурие тепĕр çӳлĕ юпа кăтартрĕ. Юпа инçетре, анчах питĕ çӳлĕ.

— Çав юпа вара Атăл хĕрринчи юпасенчен те интереслĕ!— терĕ Павăл тете.— Вăл халь ĕçлемест-ха, анчах часах ĕçлеме пуçлать. Ăна телевидени теççĕ. Ăнланатăн-и, Кĕркури, эпĕ Шупашкарта е Мускавра ларатăп — мана эсĕ хăвăр ялта курма пултаратăн. Шупашкарта спектакль кăтартаççĕ, тейĕпĕр,— эсĕ ăна хăвăр ялта курма пултаратăн. Ларатăн та сĕтел хушшине, телевизор çине пăхатăн, телевизор çинче вара кинори пек йăлтах курăнать! Кăçал ĕçлеттерме пуçлаççĕ ĕнтĕ çав юпана! Акă епле вăл пирĕн хула!

Кĕркури «Ай-яй» текелесе пуçне çеç сулларĕ.

Магазинта Павăл тете ун валли питĕ нумай кĕнеке илсе тултарчĕ, Кĕркури юриех шутласа пăхрĕ те — мĕн чухлĕ тетĕр эсир?— вунултă! Кĕнекесене пурне те шултра саспаллипе çырнă, тата вĕсем пурте картинкăллă. Суйланă чухне Павăл тете кашнийĕнчех Кĕркурирен:— Çакна илетпĕр-и? Çакна та илетпĕр-и?— тесе ыйтрĕ. Вара хăй çавăнтах:— Илетпĕр, куна та илетпĕр,— терĕ. Павăл тете хăй валли икĕ кĕнеке çеç илчĕ, анчах икĕ кĕнеки Кĕркурин вунултă кĕнекинчен те хулăмрах пулчĕ.

Кĕнеке сутакан аппа Павăл тете кĕнекисене те, Кĕркури кĕнекисене те хутпа чĕркесе пачĕ.

— Ну, çӳресе ывăнмарăн-и-ха?— ыйтрĕ Павăл тете.

— Çук, пĕрре те ывăнман!— терĕ Кĕркури.

— Апла пулсан, çурт тунă çĕре çитсе килер.

...Сарлака та тап-таса хула урамĕпе тăвалла утнă май Кĕркури çӳлĕ чул çуртсене, тĕрлĕ тĕслĕ сăрăпа сăрланăскерсене, пăха-пăха пычĕ. Пĕр çĕрте ăна Павăл тетĕш панулми евĕр икĕ япала илсе пачĕ. Хăйсем вĕсем сап-сара тĕслĕ, хуппи сĕвĕнет. Кĕркури пĕрин хуппине пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн сӳсе пăрахрĕ те çиме пуçларĕ. Питĕ тутлă! Анчах теприне вăл çимерĕ, тĕрлĕ майлă çавăркаласа пăхнă хыççăн кĕсйине чиксе хучĕ. «Эпĕ ăна киле кайсан Ваççана паратăп»,— терĕ.

— Мĕнле Ваççана?— ыйтрĕ Павăл тете.

— Ҫириле Ваҫҫи. Вăл мана пĕркун хăй те пилĕк пĕрчĕ иҫĕм ҫырли ҫитернĕччĕ.

Павăл тете Кĕркури ҫине темле ăшшăн-ăшшăн пăхса пычĕ те:

— Ваҫҫа валли татах туянăпăр, нумай туянăпăр, куна вара ҫисе яр, тутлă вĕт...— терĕ.

Мандарина ҫиме шел пек туйăнчĕ пулин те, Кĕркури ăна савăнсах ҫисе ячĕ.

Кăштах кайсан, вĕсем пĕр вĕҫсĕр кĕрлесе ларакан икĕ хутлă вăрăм ҫуртсем тĕлне ҫитрĕҫ.

— Мĕн кĕрлет унта?

— Ку вăл — завод, питĕ пысăк завод,— терĕ Павăл тете.

Кĕркури пăхса пычĕ те:

— Ҫук пуль,— терĕ.

— Мĕншĕн ҫук пуль?— тĕлĕнчĕ Павăл тете.

— Завод пулсан, трубисем ăҫта, тĕтĕмĕ мĕншĕн тухмасть?



— А-а, эсĕ ав мĕн ҫинчен калатăн иккен,— терĕ Павăл тете, вара ăна заводсем трубаллисем ҫеҫ мар, трубасăррисем те пурри ҫинчен, ҫавăн пекех вĕсем чылайăшĕ тĕтĕм кăларманни ҫинчен каласа ăнлантарчĕ. Кĕркури картинкăсем ҫинче трубаллă заводсене ҫеҫ курнă.

Заводран иртсен кăшт кайсанах туса пĕтереймен тем пысăкăш чул ҫурт курăнчĕ. Унта хайхи жирафа пек питĕ ҫӳлĕ крансем ларҫҫĕ,— мĕнпурĕ тăватă кран. Вĕсем ҫӳле, ҫынсем пӳрт стени тунă ҫĕре, темĕн чухлĕ кирпĕч йăта-йăта параҫҫĕ.

— Ак ҫакăнта эпĕ ĕҫлетĕп ĕнтĕ,— терĕ Павăл тете.— Ку ҫуртра килен-каякансем валли

нумай-нумай пӳлӗмсем пулаҫҫӗ, кунтах почта та, чаплӑ столовӑй та пулать. Ӑна эпир кӑҫалах туса пӗтересшӗн тӑрӑшатпӑр. Ҫу вӑл Шупашкарти чи пысӑк ҫурт пулмалла! Ҫӳле хӑпарса курас килет-и? Хӑрамӑн-и?

Кӗркури пуҫне каҫӑртса ҫӳлелле пӑхрӗ те унта таҫта-таҫта аякра ҫынсем утса ҫӳренине курчӗ, кӑшкӑрашса тем калаҫнине илтрӗ. «Хӑрушӑ пуль»,—шухӑшларӗ вӑл хӑй ӑшӗнче, унтан тепӗр хут пуҫне каҫӑртса пӑхрӗ.

— Нимӗн те хӑрамастӑп!— терӗ, кӑшт тӑрсан.

Пӗрре унталла, тепре кунталла тунӑ картлашкасем тӑрӑх Павӑл тетӗшӗ ӑна ҫӳлӗрен те ҫӳлӗрехе илсе хӑпарчӗ. Хӑпарнӑ май вӗсене хирӗҫ шур тӑмпа, кирпӗч тусанӗпе вараланса пӗтнӗ ҫынсем тӗл пулаҫҫӗ, вӗсем пурте Павӑл тетене хисеплӗн те хавассӑн сывлӑх сунаҫҫӗ, Павӑл тете хӑй те ҫавӑн пекех хуравлать.

Ҫашни виҫ-тӑват утӑм тумассеренех Кӗркури аялалла пӑхрӗ, ӑна хӑрушӑран та хӑрушӑрах туйӑнса пычӗ, анчах вӑл ҫавна палӑртас мар тесе питӗ тӑрӑшрӗ, ҫамки ҫине пӑчӑртанса тухнӑ тарне те вӑрттӑн ҫеҫ шӑлса илчӗ.

— Эсӗ аялалла ан пӑх, ҫӳлелле кӑна пӑхса пыр,— терӗ ӑна Павӑл тетӗш, аллинчен тата ҫирӗпрех тытса...

Виҫҫӗмӗш хута ҫитрӗҫ, тӑваттӑмӗш хута... Хӑпармалли нумай та юлмарӗ ӗнтӗ. Кӗркури те аялалла пӑхмарӗ... Павӑл тетӗшӗ унпа хавассӑн калаҫрӗ, Кӗркури те ҫавӑн пекех калаҫма тӑрӑшрӗ...

...Чи малтанах унӑн пуҫӗ ҫаврӑнса кайнӑ пек пулчӗ, анчах вӑл пӗр кӗске саманта, куҫ хупса илмелӗх вӑхӑта ҫеҫ — ҫавӑн пек туйӑнчӗ...

— Ну, кур ӗнтӗ хулана, йӗри-тавралла пӑхса ҫаврӑн!— янӑравлӑ сасӑпа кӑшкӑрчӗ Павӑл тете, унтан хӑй аллине Кӗркури аллинчен вӗҫертрӗ.

Ун умне мӗнпур хула ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек тухса выртрӗ. Пӳрт тӑррисем, пӳрт тӑррисем пӗр вӗҫсӗр; урамсем, картишсем, йывӑҫсем, тӗрлӗрен машинӑсемпе ҫынсем... Чи хӗрринче вара — Атӑл, Атӑл леш енче



аякра — вăрмансем, вăрмансем...

Пăхать те Кĕркури тĕлĕнет: кунтан мĕн курать вăл — пурте ăна пĕчĕккĕ пек туйăнать: йывăçсем пĕчĕккĕ, каллĕ-маллĕ куçса çӳрекен машинăсем — пĕчĕккĕ, таçта тĕлли-паллисĕр васкакан çынсем — каллех пĕчĕккĕ! Паçăр кĕрсе тухнă пысăк парка шыраса тупрĕ — тĕрĕссипе вăл пачах пысăк мар иккен. Ĕненменнипе ун пирки Павăл тетĕшĕнчен те ыйтрĕ, Павăл тетĕш: «Йăнăшмастăн, çав парках вăл» — терĕ. Хулара çӳренĕ чухне ăна хулан вĕçĕ-хĕрри çук пек туйăннăччĕ, кунтан, акă, хула хĕррисене те курма пулать.

Çавăн пек пулнăшăн вăл пĕр самантлăха пăшăрханса та илчĕ, анчах ку каллех кĕске самантлăха çеç пулчĕ. Çапах та хулана çӳлтен пăхни ăна килĕшрĕ. Антив, урамсем те тăвăр пек курăнччăр, машинăсем те, çынсем те пĕчĕк пулччăр, ун вырăнне Кĕркури кунта, сăртлă вырăнта ларакан çӳлĕ

çурт кăшкарĕ тăрринче, хăйне калама çук пысăк туять. Вăл, пилĕк çул тултарайман пĕчĕкçĕ ача, тем пысăкăш Шупашкара пĕтĕмпех курать, çитменнине тата хăй—пачах та хăрамасть. «Эх, Ваççана та кăтартасчĕ»,— темшĕн сасартăк Ваççана аса илсе шухăшлать вăл, унтан çавăнтах ун çинчен манса та каfive...

— Ну, куртăн-и ĕнтĕ халь Шупашкара?— ыйтрĕ унран Павăл тете.

— Куртăм,— кăмăллăн хуравларĕ Кĕркури.

— Пысăк-и?

— Пысăк.

Павăл тете хăй тĕллĕн кулса илчĕ те:

— Эпир ăна тата пысăклатăпăр-ха, тата илемлетĕпĕр. Тепĕр вунă çултан палламалла мар ӳсĕ вăл!— терĕ вăл. Вара Кĕркурие алăран çавăтрĕ те:— Малалла каяр, пĕчĕк çулçӳревçĕ!— тесе хушса хучĕ.

* *
*

Тепĕр кун машина çинче ашшĕпе юнашар ларса килелле кайнă май Кĕркури чĕнмесĕр пычĕ-пычĕ те:

— Атте, Павăл тете мана мĕншĕн çулçӳревçĕ тет?— тесе ыйтрĕ.

— Пĕлместĕп, темшĕн сана çапла каланă вăл,— терĕ ашшĕ.

— Эпĕ çулçӳревçĕ-им-ха, атте?

Ашшĕ хăй тĕллĕн кулкаласа илчĕ те:

— Хулана килсе кайрăн пулсан, хăвна майлă çулçӳревçĕ пултăн çав ĕнтĕ,— терĕ, унтан, малтанхи пекех ăшшăн кулкаласа:— Анчах халлĕхе эсĕ чăн-чăн çулçӳревçĕ мар-ха, пĕчĕк çулçӳревçĕ,— тесе хучĕ.

Цена 45 коп.
С 1. I. 1961 г. цена 4 коп.